307 233 g
II

ПРОЛЕТАРИИ ВСЕХ СТРАН, СОЕДИНЯЙТЕСЬ!

ПОСТАНОВЛЕНИЯ

IV(9) ВСЕЧУВАШСКОГО С‘ЕЗДА СОВЕТОВ

4—12 ФЕВРАЛЯ 1931 г.

ИЗДАНИЕ ЦИК‘а ЧАССР

ЧЕБОКСАРЫ * * * 1931 ГОД

Ҫăваш республĕк правиттĕлстви, тата ССР Сойусĕпе РФССР правиттĕлствисем йышăннă паллăрах текретсемпе постановленисем

САККУНСЕМПЕ ХУШУСЕМ

СБОРНИК УЗАКОНЕНИЙ и РАСПОРЯЖЕНИЙ

Рабоче-крестьянского правительства Чувашской автономной советской социалистической республики и важнейших декретов и постановлений правительств СССР и РСФСР

1 марта 1931 года № 2 Год издания 6-й

СОДЕРЖАНИЕ:

Постановления IV (9) Всечувашского с'езда советов.

1. По отчету Нижегородского крайисполкома.

2. По отчету правительства ЧАССР и дальнейших задачах хозяйственного и социально-культурного строительства.

3. О культурном строительстве и подготовке кадров.

4. О весенней посевной кампании и коллективизации.

5. О Государственном гербе и флаге ЧАССР.

6 По рапорту Чувашского совета о-ва АВТОДОР и выступлений на с'езде представителей Центрального совета о-ва АВТОДОР и Центрального Аэро-гидродинамического института Союза.

7. О месячнике по ликвидации прорывов в мобилизации средств, в заготовках и в подготовке к весенней посевной кампании.

8. ВЫБОРЫ.

9. Постановления Первой сессии Центрального исполнительного комитета ЧАССР IV (9) созыва.

ГУ "Государственная книжная палата Чувашии"
Минкультуры Чувашии
428020, г. Чебоксары, ул. Гладкова, 6

Отпеч. в типографии № 1
Ч у в а ш г и з а
Уп. Чувашглавлита № 1312
Заказ № 319
Тираж 5000 экз.

Ђăваш респуплĕкĕнђи советсен IV (9)-мĕш сйесĕ йышăннă постановленисем:

1. Ђулхула крайĕнђи советсен Ĕçтăвкомĕн отђођĕ тăрăх.

Совет сойусĕн сотсиалисăм строиттĕлстви сарлака наступлени туса пыни, пысăк интустри кикантла ўссе, вăл сотсиалисăм строиттĕлствин тĕп никĕсĕ пулса тăнинђен, пролеттариат йышĕ хутшăннипе ĕçсĕрлĕх пĕтĕмĕшпе пĕтсе пынинђен, тата шултра совхоспа колхос строиттĕлстви вăйланса пынипе йалхуçалăхĕ тĕпренех улшăнса пынинђен лайăх курăнса тăрат. Малалла та рапођђи класпа ĕçлекен патраксен, колхоçнĕксен, тата ђухăнсемпе вăтамсен хастарлăхĕ ўссех пынипе, талккăшпех колхоссем туса пынă май кулаксен класне тĕппипех кăкласа пыни,—хамăр çĕршыври клас тăшманĕсемпе кăпиталисăмла тĕнђери клас тăшманĕсене урса кайсах хирĕçтерет.

Кăпиталисăмăн еккономĕк криçĕсĕ тарăнланса пынă май ĕçсĕрлĕх хытă ўсни, шалтипе тулти хирĕçўсем çивĕђленни, рапођђи класăн ревољутсиллĕ йухăмĕ ўсни кăпиталисăмла патшалăхсене урса кайсах вăрça хатĕрлентерет, Совет сойусĕн мирлĕ строиттĕлствине хăрушлăх илсе килет.

Сотсиалисăмла еккономĕкăн никĕсне туса çитерекен пилĕк çуллăхăн виççĕмĕш çулĕнђи сатађ рапођђи класпа пĕтĕм ĕçхалăх массисене хăйсен хастарлăхне пысăккăн хăпартма, тата советсен çĕршывĕн сыхлăхне пĕтĕм вăйпах тĕреклетме хушат.

Çак иртнĕ икĕ çул хушшинђе Ђулхула крайĕ хуçалăхпа куљтур строиттĕлствинђе пысăк çитĕнўсем турĕ. Вăл çитĕнўсем йалхуçалăхпе промышлĕннăçлă крайран промышлĕннăçпа йалхуçалăхлĕ край туса йама пулăшрĕç, çав вăхăтрах натсиллĕ автономисен хуçалăхĕсене те малалла туртăнтарма май пулђĕ. 1930-мĕш çулта промышлĕннăça 175 мĕлйун тенкĕ хунă, 1931-мĕш çулта 300 мĕлйун тенкĕ хывăнат. Пилĕк çуллăхăн виççĕмĕш çулĕнђе Совет

сойусне пит пысăк тĕрек парса тăракан претприйаттисем эксплоаттатсийе кĕреҫҫĕ. Вĕсем ҫаксем: автомопил савăҫĕ, станоксем тăвакан савăт, т. ыт. те.

Йалхуҫалăхĕнҫе тата ҫакăн пек ҫитĕнӳсем пулнă: 1930-мĕш ҫулта акмалли ҫĕр лаптăкĕ 6.032 пин кектар пулнă, 1931-мĕш ҫулта ку хисеп 12 проҫҫăн ӳсет. Ҫак иртнĕ отҫотлă вăхăтра совхоссем акса тăвакан ҫĕр лаптăкĕ 12 пин кектартан 23 пин кектара ҫитиҫҫен хăпарнă. 1931-мĕш ҫулта вĕсен ҫĕр лаптăкне 783 пин кектара йахăн ҫитересси курăнса тăраҫ. Колхоссем тăвас ĕҫ ҫак икĕ ҫул хушшинҫе 3 проҫҫăнран пуҫласа 12 проҫҫăна ҫитнĕ. Ку вăтам шутпа, уйрăмăн илсе пăхсан, колхос тăвас ĕҫ хăшпĕр ҫĕрте 50—60 проҫҫăна ҫитет. Патраксемпе ҫухăнсен тата вăтамсен хастарлăхĕ ҫĕнĕрен хăватланни, 21 машшинпа трактăр стантси орканисатсиленни, тата йалхуҫалăхĕн технĕк майĕсем пысăкланса пыни, 1931-мĕш ҫулта крайри ҫухăнпа вăтам хуҫалăхсене 20—25 проҫҫăн таран колхоссемпе ҫавăрса илме тĕрек параҫ.

Ҫак ҫитĕнӳсем парттин тĕп ҫулйĕрне ҫирĕп тытса пынипе рапоҫҫи класпа ĕҫхреҫҫен массисен хастарлăхĕ калама ҫук хăватланнипе, сотсиалисăмла ĕҫ формисем (сотсиалисăмла ăмăрту, утарнĕҫҫĕствă тата хирĕҫле промфинплансем) сарăлса пынипе пулнă. Ҫак ҫитĕнӳсем епĕр клас тăшманĕсемпе, парттин тĕп ҫулйĕрĕнҫен пăрăнса кайнисемпе—халҫхи вăхăтра ҫи пысăк хăрушлăх пулса тăракан сылтăм сулăнҫăкпа «сулахай» сулăнҫăксемпе, тата вĕсемпе килĕштерекенсемпе, аслă патшалăх шовинисăмĕпе, вырăнти натсионалисăмла туртăнăҫсемпе пĕр ҫарăнмасăр кĕрешнипе кăна пулнă.

1. Пĕтĕм Ҫăваш республикĕнҫи советсен сйесĕ Ҫулхула Крайĕҫтăвкомĕн ĕҫсем ҫинҫен Оҫмăв йулташ токлатне итлесе, сӳтсе йавнă хыҫҫăн, крайĕҫтăвкомăн ĕҫĕсене мухтарĕ. Вăл ĕҫсем парттин тĕп ҫулйĕрне пурнăҫа тĕрĕс кĕртсе пырас майпа пулса пынă, терĕ.

Сйес еккономĕкпа происвотствăллă районлани ҫителĕклĕ пулса пынине палăртрĕ. Ку ĕҫ крайри, тата крайа кĕрекен автономисĕн интустрине вăйлатса, йалхуҫалăхне сотсиалисăмла улăштарса пырас ĕҫре пролеттариат пуҫ пулса, йертсе пырассине ҫирĕплетнине палăртса параҫ.

Крайра автомопил савăтне, Ҫернореҫҫĕнск кăмпинатне, тата станоксем тăвакан савăта тума тытăнни, пĕтĕм Совет сойусĕшĕн хаклă ĕҫ пулса тăраҫ. Вăл халăх хуҫалăхне ҫĕнĕ, пысăк технĕк

никĕсĕ çине лартма пулăшаҫ. Сйес Крайĕçтăвкома çак пуçăннă строиттĕлствăна вăхăтра туса çитерме кирлине асăрхаттараҫ. Тата вăл претприйаттисем валҫăи çĕнĕ технĕккăна кирлĕ катăрсене хатĕрлесси çине тимлĕ пăхмалла. Енеркеттĕккă хуçалăхне кирлĕ таран хăнартмаллине те асран йамалла мар. Çавăнпа та районсенҫе тума палăртнă електростантсисен строиттĕлствине пуçăнмалла, çĕнĕ рессурсăсем тупас тĕлĕшпе татăклă ĕçлеме тытăнмалла (торф, слантсă, шыв вăйĕ).

Малашне те меттал промышлĕннăçне вăйлатса йарасси, уйрăмăнах машшинсем тăвас ĕçе вăйлатасси пысăк вырăна тухса тăраҫ. Крайри промышлĕннăçăн пилĕк çуллăх планне тултарса çитермеллех.

2. Ӳссе сарăлса пыракан халăх хуçалăхĕнҫе транспăрт уйрăмăнах «хĕсĕк» вырăнта тăраҫ. Çавăнпа та, крайри хуçалăх орканисатсисен тимĕр çулĕсемпе шыв çулĕсем çинҫи простойсемпе, тийенсе çитменлĕхсемпе, йапаласене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна йĕркеллĕ куçарманнипе тивĕçлĕ кĕрешсе пымалла.

Пур пек ҫукун çулсемпе шыв транспăрҫĕн тоннашĕ[1]) патшалăхпа Ҫулхула крайĕнҫи ӳссе пыракан халăх хуçалăхĕшĕн çителĕклĕ мар. Çавăнпа та крайри районсемпе çыхăнса тăрас ĕçе çителĕклĕ туса пыма çук. Çакна кура, советсен сйесĕ çитес вăхăтрах çĕнĕ ҫукун çулсем тума палăртса хунă строиттĕлствăна тытăнмаллине, шыв транспăрҫĕн тоннашне ӳстермеллине асăрхаттарса параҫ. Кунпа пĕрлех тата каттĕрсем пăрахутсем тăвакан савăтсен строиттĕлствине пуçăнма кирли килсе тухаҫ. Транспăртăн ытти пайĕсене те вăйлатмалла. Нимрен ытла автомоттор çыхăнăвне вăйлатма кирлĕ. Ку крайри автономисемпе, районсемпе çыхăну тытас ĕçе çăмăллатаҫ.

3. Сарăлса пыракан колхос строиттĕлстви йертсе пырас ĕçе лайăхлатма ыйтаҫ. Сйес Крайĕçтăвкомпа йалхуçалăхне сотсиалисăмла рекконструксилесе пырас тĕлĕшпе крайри опператтивлă оркăнсен хăйсен ĕçĕсене лайăхлатма кирли çинҫен асăрхаттараҫ. Колхос тăвасси никĕсĕ çинҫе пирĕн потрепиттĕллĕ крайран происвотствăллă край тума тăрăшмалла.

4. Пилĕк çуллăха тăватă çулта туса çитерес çĕрте Ҫулхула крайĕнҫе алăсти промышлĕннăçĕ пысăк вырăн йышăнаҫ. Крайри орканисатсисен ку ĕç çине тимлĕн пăхмалла. Ку тĕлĕшпе нимрен ытла натси автономисем мала тухса тăраççĕ. Натсипе йăла уй-

1) Тийевлĕхе.

рăмлăхĕсем промысласене мехханисатсилесе, пĕрлешӳллĕ маçтерскойсем туса, кустарсен ĕçĕсене улăштарма ыйтаççĕ.

5. Крайри снапшенипе крайри копператси ĕçĕсене ĕçхалăхне нумайрах усă кӳмелле май татăклă çĕнетсе улăштарма кирлĕ. Ҫи малтан протоволҫствипе сарлакан усă курмалли таварсене промышлĕннăçла районсене, нимрен ытла натси пĕрлешĕвĕсене валҫи тăратма кирли курăнса тăраť.

6. Натси автономисен кайа йулнă хуçалăхсене малалла йарас тĕлĕшпе Крайĕçтăвкомпа крайри орканисатсисен натси пĕрлешĕвĕсен нушисене ытларах пулăшса пырас май çавăрса йамалла. Нимреп ытла промышлĕннăçпа çĕнĕ ĕçсем пуçласа йамалли вырăнсене шыраса тупасси çине, квалификатсиллĕ рапоҫҫисем хатĕрлеме т. ыт. те ытларах пулăшмалла.

7. Çак йулашки çулсенҫе Ҫăваш республĕкĕн промышлĕннăç строиттĕлствинҫе пысăк çитĕнӳсем пулҫăç. Пилĕк çуллăх планпа йышăннă строиттĕлствăн хăвăртлăхĕсене ӳстересси, Ҫăваш республĕкĕн халăх хуçалăхне сотсиалисăма май улăштарса пырас ĕçре татăклă вырăн йышăнаť. Çак çулта Крайри советсен ĕçтăвакан комиттеҫĕн Вăрнарти енеркипе хими кăмпинатне тăвас сине татăклă каласа памалла. Енеркипе хими кăмпинатне пройектлассине тĕплĕ туса çитермелле. Кунсăр пуçне, Улатăр, Кирски йăвăç кăмпинаҫĕпе Çĕмĕрлери хут хапрăкне пройектăлассине тĕпĕтерме тăрăшмалла.

Ҫăваш республĕкĕнҫе пысăк вырăн йышăнакан вăрман промышлĕннăç хуçалăхне йĕркелессипе вăрман ĕçне тăвас тĕлĕшпе Крайĕçтăвком йенҫен кăтартусем парса, тата хăйĕн йышăнăвĕсен çитерсе пынă пулсан та, «Çеввослес» тресĕ вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен кĕçĕн орканисатсисене кирлĕ таран йертсе пыман вăрман хуçалăхне мĕнле тухăçлатма кирлине кăтартса паман. Вăрмана усăллă експлоаттатсилемелли майсене лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçлемен, тата вăрман çитĕнтерес ĕçре кирлĕ сретствăсене паман. Малашне вăрман хуçалăхĕпе вăрман промышлĕннăçне йертсе пырассине тĕпренех лайăхлатма кирлĕ.

8. Натси патракĕсемпе ҫухăнсем, тата колхоçнĕксем хушшинҫен натси пĕрлешĕвĕсен çĕнĕ промышлĕннăçла претприйаттисен валҫи квалификатсиллĕ рапоҫҫисем хатĕрлес тĕлĕшпе, вĕсен крайри ҫи пысăк претприйаттисенҫе вĕрентессине вăйлатма кирлť пулаť.

Капитальнăй строительствă тӗлӗшпе тумалли ӗҫсене йӗркелеме пултаракан иншенер-технӗк вăйӗсем автономисенҫе ҫителӗклӗ марри (ҫӗнӗ промышлӗннăҫа претприйаттисене никӗслес ҫӗрти уйрăм ыйтусем, строительствă пройектисене хатӗрлессипе сăмах татса парасси, ăсталăхпа тӗпҫев ӗҫӗсене вăйлатасси) Крайӗҫтăвком умне, иншенер-технӗк вăйӗсенҫен прикатăсем орканисатсилесе, вӗсене тӗпҫев ӗҫӗсене тума вăрăм вăхăтлăха натси автономисене йарас сатаҫа кăларса тăратаҫ.

9. Сйес крайра, тата унта кӗрекен натси автономисенҫе сотсиалисăм строительстви йепле сарăлса пынипе ӗҫхалăх массисене сарлакан паллаштарма кирли ҫине кăтартса параҫ. Куна тăвас тесен масăллă литтераттурпа хаҫат-шурнал кăларассине вăйлаттăма кирлӗ. Колхоссемпе натси автономисен рапоҫҫисен крайри пысăк претприйаттисемпе, стройккăсемпе (Сурăм, автăсавăт, Палахна, т. ыт. те) смыҫкăллă екскурҫсийӗсене туса пыни кирлӗ. Ӗҫхалăхсен ҫыхăнăвӗпе интернатсилле вӗренӗвӗ ҫирӗпленсе пынă май, крайри ҫитӗнӳсене массăллă сарасси, крайри сотсиалисăм строительствине вирлӗ сарасси, уйрăмăнах натси автономисен хуҳуҫалăхне сотсиалисăмла урăхлатасси татах та вăйланса кайӗ.

Ҫăваш республикӗнҫи советсен 4-мӗш сйесăн
претҫетаттӗлӗ **А. Никиттӗн.**
Ҫекреттарӗ **А. Хариттонăв.**

2. Ҫăваш республӗк правительстви отҫоҫӗпе Ҫăваш ҫӗршывӗн хуҫалăхпа сотсиалҫнă-культтур ӗҫӗсен малашнехи сатаҫсем ҫинҫен.

Сотсиалисăмлă наступлени вăйлă сарăлса пынă май ҫак иртнӗ икӗ ҫул хушшинҫе ССР Сойусӗнҫе сотсиалисăм тăвас ӗҫ калама ҫук пит хăвăрт ӳссе пыҫӗ. Хуҫалăхăн пур паллăрах пайӗсенҫе те пилӗк ҫуллăх план тăрăх йышăннисенҫен ытларах та пурнăҫа кӗнӗ.

Патшалăхăн пысăк промышлӗннăҫӗ пилӗк ҫуллăх план тăрăх 29,3 мӗлйарт тенкӗлӗх тавар пулмалла пулнă пулсан, ҫак икӗ ҫултах 30,5 мӗлйарт тенкӗлӗх тавар кăларнă; ҫак шутран йăвăр индустри пилӗк ҫуллăхăн малтанхи икӗ ҫулӗнҫе 12,5 мӗлйарт тенкӗлӗх парасси вырăнне 13,8 мӗлйарт тенкӗлӗх панă.

Сотсиалисăмлă промышлӗннăҫăн ҫак ҫитӗнӗвӗсем йалхуҫалăхне те сотсиалисăмла улăштарас ӗҫе кӗретех вăйлатса, йалти вă-

там хресҫенсен массине те сотсиализӑм йенне çавӑрҫӗ. Коллективсатси тӗлӗшпе пилӗк çуллӑх план тӑрӑх йышӑннӑ шута малтанхи икӗ çулӗнҫех икӗ хут ытларах тултарнӑ. Талккӑшпех колхоссем тунипе кулаксене те класӗпех пӗтерес ӗç пурнӑçа кӗрсе пыраҫ.

Халӑх хуçалӑхӗ çил-тӑвӑллӑ ӳссе пынипе ӗççӗр çӳрессине пӗтернӗ, рапоҫҫи класпа ӗçхалӑх массин пурнӑçӗпе куҫттурлӑх хӑпарнӑ.

Пирӗн çӗршыв сотсиализӑмла наступлени тапхӑрне сотсиализӑм вӑхӑтне кӗҫӗ. Пилӗк çуллӑхӑн виççӗмӗш татӑклӑ çул умӗнҫе ҫи пысӑк историллӗ сатаҫ тӑраҫ—вӑл сотсиализӑмла еккономӗкӗн нийӗне туса пӗтересси.

Сотсиализӑм тӑвас ӗç сарӑлса пынӑ тапхӑрта Ҫӑваш çӗршывӗн еккономӗк сотсиаҫнӑй майсемпе кайас ӗç те кӗретех вӑйланҫӗ.

Халӑх хуçалӑхӗн мӗн пур тухӑçӗ 1927—28-мӗш çулта 96 мӗлйунлӑх пулнӑ пулсан, 29-мӗш çулта 118 мӗлйунлӑх, 1930 çулта 132,1 мӗлйун тенкӗлӗх пулнӑ. Пӗрлештернӗ çектӑр пайӗ 1927—28-мӗш çулта 15,4 проҫҫӑн йышӑнса тӑнӑ пулсан, 1929-мӗш çулта 25 проҫҫӑн, 1930 çулта 39 проҫҫӑна çитнӗ. Халӑх хуçалӑхӗпе сотсиаҫнӑ-куҫттур ӗçне иртнӗ икӗ çул хушшинҫе 28 мӗлйун тенкӗлӗх кӑпитал йанӑ.

Уйрӑмах пысӑк çитӗнӳсем йалхуçалӑхне рекконструксилес ӗçре палӑраççӗ. Пӗтӗм республикӗпе 1929 ç. окҫапӗрӗн 1-мӗшне колхоссене пӗрлешнӗ ҫухӑнсемпе вӑтамсен хуçалӑхӗсем 3,6 проҫҫӑн пулнӑ пулсан, 1931-мӗш çул йанварӗн 1-не 13,2 проҫҫӑн таранҫҫен хӑпарса, пилӗк çуллӑхӑн йулашки çулӗнҫи шута тулнӑ. Сйес пухӑннӑ вӑхӑталла колхоссенҫе 27000 ытла ҫухӑнсемпе вӑтамсем хуçалӑхӗсем кӗрсе, вӗсен проҫҫӑнӗ 15 çитнӗ. Колхос йухӑмӗ ҫӑнласах массӑллӑ хускану пулса тӑнӑ. Çӗнӗрен 4 машшинпа тракторӑн стантсисем уçӑлаççӗ, вӗсем талккӑшпех колхосласа çак майпа кулаксене класӗпех пӗтерес ӗçре тӗрекленмелли никӗс пулса тӑраççӗ. Çак отҫот вӑхӑтӗнҫе йалхуçалӑхӗ колхосланнӑ майпа кӗретех хӑвӑрттӑн ӳсме пуçларӗ,—çултан çул акакан çӗр шуҫӗ ӳссе пыраҫ, нумай пусӑллӑ хире куçасси, курӑк акасси, ӗçӗн техникне йӗркелесси, йалхуçалӑх таварӗсене ӗçлесе улӑштармалли претприйаттисем тӑвасси вӑйлансах пыраççӗ.

Советсен виççӗмӗш сйесӗ хыççӑнхи вӑхӑт промышлӗннӑç та кӗретех вӑйланнӑ тапхӑр пулса тӑраҫ: Ҫӑваш çӗршывӗнҫе çак вӑхӑтра тин çӗнӗ савӑтсем нумайрах тӑва пуçланӑ. Çак савӑтсене

туса пĕтерсе ĕçе йанă: тир-сăран имçамĕсем, фосфорит, скипитар тăвакан савăтсем, кирпĕç тăвакан савăтсем (иккĕ) Çĕмĕрлерипе Куславккари кăмпинатсене, Шупашкарти кирпĕђ савăтне туса пĕтереççĕ.

Халăх хуçалăхĕн тĕп канашĕпе Снапшени кăмиссариатне пăхăнса тăракан промышлĕннăçа иртнĕ икĕ çул хушшинђе мĕн пурĕ 9.800 пин тенкĕлĕх кăпитал кĕртнĕ.

Çĕнĕ савăтсем ĕçле пуçланипе, кивĕ савăтсем те происвотствă йенĕпе ĕлĕкхинђен нумайрах ĕçле пуçланипе промышлĕннăçăн тухăçĕ те пайтах ӳснĕ (1929 ç. 8.200 пин тенкĕлĕх, 1930 ç. 22.400 пин тенкĕлĕх тавар кăларнă).

Сотсиаљнă куљттур ĕçĕнђе пысăк çитĕнӳсем палăраççĕ. 1930 ç. кĕркуннерен пуçласа 8—10 çулхи пур ађапăђасене те кĕçĕн шкулсенђе вĕренте пуçланă. Хут пĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Катăр хатĕрлемелли уђрештенисен шуђĕ пайтах ӳснĕ (аслă шкул, çĕнĕ рапфаксем, технĕккăмсем, т. ыт. уçăлнă).

Пилĕк çуллăхăн икĕ çулхи мĕн пур ĕçсене шутласан Ђăваш çĕршывĕнђи хуçалăхпа куљттур строиттĕлстви пит малалла кайни курăнаť.

Ђăваш çĕршывĕнђе хуçалăхпа куљттур ĕçĕсем çапла çитĕнӳллĕ ӳсни, вăл пĕтĕм Совет сойусĕнђи пысăк çитĕнӳсенђен, партти тĕп çулйĕрне çирĕп тытса пынăран, тата пур сулăнђăксемпе те вĕсемпе килĕшекенсемпе, уйрăмах сылтăм оппортунисăмпа пĕр ђарăнмасăр кĕрешсе, натси тĕлĕшпе политтĕке пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пынăран ĕçсем çапла ăнăçлă пулса пынă тесе, шутлаť, советсен 4-мĕш сйесĕ.

Ĕçри çитĕнӳсем клас кĕрешĕвĕ вăйланса пынă вăхăтра, кăпиталисла елементсем çине çирĕп пусса пынипе, Пĕтĕм Соойусри Комуниссен (пољшевиксен) парттипе Совет влаçĕ тавра çирĕп ђăмăртаннă рапођђи класпа ĕçхалăх масси пысăк хастарлăхпа ĕçе вăйлăн пуçăнса, ĕçе сотсиалисăмла çĕнĕ майсемпе: сотсиалисăмла ăмăртса, утарнĕкле, опђăллă пукçирла, хирĕçле промфинплан йышăнса ĕçленипе çапла ăнăçлă пулнă.

Ђăваш респуплĕкĕнђи хуçалăхпа куљттур строиттĕлствинђи ăнăçусем пролеттари тиктаттурĕпе совет йĕркиллĕ майсемпе çех пулма пултарнă. «Ђăваш хуçалăхĕ калла ђакаť», «ђăвашсем тăнпуç йенĕпе те ӳťшăмшакĕпе те имшерленсе пыраççĕ, «Ђăваш çĕршывĕ сотсиалисăмалла илсе пыракан аслă çултан пĕр хĕрри-

не йулаҫ», тесе ӗмрисем кӗскелсе ҫитнӗ клас тӑшманӗсем—кулак-семпе пуршуйсем сӳпӗлтетекен нимӗне тӑман сӑмахсене Совет-сен сйесӗ кӗретех сивлет.

Пирӗн Совет ҫӗршывӗнҫи сотсиализӑм тӑвас ӗҫри ҫитӗнӳсем, капиталисӑмпа кӗрешес тӗлӗшпе сотсиализӑм малашне те ҫӗнтерӳллӗ пырасси—тӗрлӗ вак халӑхсем хушшинҫе, ҫав шутра Ҫӑваш республикинҫе те ку таранҫҫен тӗнҫе курман ӗҫсем тума маҫ параҫҫӗ.

Советсен 4-мӗш сйесӗ Ҫӑваш республикӗн правительствин иртнӗ отҫот вӑхӑтӗнҫи ӗҫсене, тата Ҫӑваш ҫӗршывӗнҫи хуҫалӑхпа культур строительствин 1931 ҫулхи контроль ҫыхвӑрӗсене пӗтӗмпех ырласа, ҫапла йышӑнаҫ:

Пӗтӗм ӗҫе вӑйлатса йарса республикӗкри халӑх хуҫалӑхӗн сотсиализмла пайне малашне те пӗр ҫарӑнми ӳстерсе пырса, пилӗк ҫуллӑх плана тӑватӑ ҫултах пурнӑҫа кӗртмелле. Пилӗк ҫуллӑхӑн виҫҫӗмӗш татӑклӑ ҫулӗнҫе Ҫӑваш ҫӗршывӗн экономӗкне кӗретех урӑхлатса, халӑх хуҫалӑхӗн сотсиализмла пайне уйрӑм ҫынсенҫен вӑйлӑрах тумалла.

Полҫшевикла хӑвӑртлӑхсемпе ӗҫлесе ҫак ҫулта халӑх хуҫалӑхӗн мӗн пур тухӑҫлӑхне 35,7 проҫҫӑн ӳстермелле (1930 ҫулта 132,1 мӗлйун тенкӗлӗхрен кӑҫал 179,5 мӗлйун тенкӗлӗх пулмалла), пӗрлештернӗ ҫектӑрӑн мӗн пур тухӑҫӗ (30 ҫулхи 39 проҫҫӑн вырӑнне), кӑҫал 53 проҫҫӑн пулмалла, пӗрлештернӗ ҫектӑра мӗн пурӗ 30,8 мӗлйун тенкӗлӗх укҫа-тенкӗ йамалла (иртнӗ 1929—30 ҫулхинҫен 69 проҫҫӑн ӳсмелле).

1. Йалхуҫалӑх йенӗпе.

Малашне совхоссемпе колхоссене вӑйлӑрах сарса пырас ӗҫ — хуҫалӑх строительствинҫи тӗп сатаҫ пулса тӑраҫ. Коллективисатси йенӗпе, пулнӑ ҫитӗнӳсем тӑрӑх колхоссене ҫӗнӗрен хуҫалӑхсем кӗрсе пынипе, машшинпа трактӑр стантсисем уҫнипе, 1931 ҫулта йалхуҫалӑхне рекконструксилес тӗлӗшпе ӗҫе кӗретех вӑйлатса, ҫак ҫул пӗтнӗ вӑхӑта республикӗкри ҫухӑнсемпе вӑтам хуҫалӑхсене 80 проҫҫӑн колхоссене кӗртмелле, ҫак ӗҫе колхосӑн тӗп йӗркисене асӑрхаса ӗҫлемелле (колхоса ирӗкле кӑмӑлтан кӗресси, халҫхи вӑхӑт тапхӑрӗнҫе—йалхуҫалӑх ертелӗ колхосӑн тӗп форми шутласси). Машинпа трактӑр стантсиллӗ районсем талкӑшпех колхоссем тума пулӑшакан пунктӑсем пулса, ҫак майпа кулаксене те класӗпех пӗтерме пулӑшмалла. 1931 ҫулта коллективисатси ӗҫне

вăйлăн сарса, пĕрле ĕçлессине тĕреклетсе, пилĕк çуллăх тулна çĕре республĕкре талкăшпех колхоссем йĕркелес ĕçе татăклă пĕтермелле. Пирĕн çав тĕрлĕ пысăк ӳсĕме пурнăçа кĕртмешкĕн, йалхуçалăхне сотсиализмла рекконструксилес, ĕçе малалла йамашкăн, пĕтĕм Ҫăваш çĕршывĕнҫи ĕçхалăхĕ вун хут вăйлăрах тăрăшса, сотсиализм ĕçне пĕтĕм революцилле кăмăлпа парăнса, класс тăшманĕ хирĕçнине пĕр хĕрхенмесĕр çапса салатса, колхоссенҫен кулак йышши çынсене тасатса, ĕç хăй тĕллĕнех пулса пырассине оппортунисла кĕтсе ларакансемпе татăклă кĕрешсе ĕçе малалла шăвтармалла.

Колхос çектăрĕн мĕн пур ĕçĕсене пахалăх йенҫен пит тимлĕн йĕркелесе çирĕплетсе пыма тăрăшмалла, (пĕрлештернĕ уйăрăлми фонтсем тăвасси, ĕçпе происвотствăна тĕрĕс йĕркелесси, пухнă тырпула валеçесси, ĕç технĕкне çирĕплетесси, ĕç ӳсĕмне хăпартасси, йалхуçалăхне нумайрах тупăш памалла тăвасси, ĕмĕтсĕрленекен çынсемпе кĕрешесси), çав хушăра çăмăлрах майлă пĕрлешӳсене, кĕçĕн коопператтивсене те орканисатсилесе, вĕсене те тĕрекletме тăрăшмалла.

Контрактатси тĕлĕшпе ССР Сойусĕн Тĕпкомĕпе Халăх кăмиссарĕсен канашĕ ҫĕнсе çырса йанă çырăва халăх хушшине сарса ăнлантарса, унта каланисене кулленхи пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пĕтĕм халăх хушшинҫе массăллă ĕçе сармалла, çав ҫĕнӳллĕ çыру йалхуçалăхне сотсиализмла улăштарас ĕçре пилĕк çуллăхăн виҫçĕмĕш çулĕнҫи çапăçуллă прокрамми пулса тăмалла.

4. Машшинпа трактăр стантсисем уçас ĕçе кирлĕ пек çирĕппĕн йĕркелесе, çав стантсисем клас çулйĕрне тĕрĕс тытса, утарлă хăвăрттлăхсемпе ĕçлесе, талкăшпех колхоссем тăвас ĕçс çирĕп йертсе пыракан тĕреклĕ вырăнсем пулса тăмалла. Малашне тытти районсенҫе те ҫереҫĕпе уçмалли машшинпа трактăр стантсисем уçас ĕçе пĕр ҫарăнмасăр хатĕрленсе пырса, çак çитес çулсенҫе МТ стантсисем нумайрах тумалли плана пурнăçа кĕртмелле тăвас.

Совхоссем йĕркелес тĕлĕшпе хальҫҫенхи совхоссене тĕреклетессипе пĕрлех выльăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетмелли пысăкрах совхоссем орканисатсилемелли сатаҫа кăларса тăратмалла, пилĕк çуллăхăн йулашки виçĕ çулĕ хушшинҫе тăватă çĕнĕ совхос уçмалла, вĕсенҫен иккĕшне кăçалах туса тытăнмалла.

Советсемпе тĕрлĕ опҫăллă орканисатсисем пĕтĕм рапоҫҫысемпе колхоçнĕксене, ҫухăнсемпе вăтамсен массине ĕçе тимлĕн

йавăҫтарса, сотсалисăмла йĕркепе выльăх-ҫĕрлĕх усрас ĕҫе йĕркелесе тĕрсклетмелле. Пилĕк ҫуллăхăн виҫҫĕмĕш ҫулĕнҫе Ҫăваш республикне йутран апат-ҫимĕҫ кӳрсе тăранса пурнакан ҫĕршывран, выльăх-ҫĕрлĕх нумай ĕрҫетнипе йута тавар кăларса тăракан район туса хурас тĕлĕшпе ĕҫе кĕретех урăхлатса йамалла. Ҫак ĕҫре колхоссенҫе промышленнăҫлă фермăсем, колхоссенҫе, совхоссенҫе ăратлă выльăхсем ĕрҫетмелле.

Выльăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетмешкĕн выльăх апатҫĕ нумайрах хатĕрлеме тăрăшмалла. Ҫавăнпа нумай пусăллă хир туса акма, курăксемпе тымарҫимĕҫсем нумайтарах акмашкăн халăх хушшинҫе вăйлăрах тăнлантарса малашне уйхир ĕҫне выльăх-ҫĕрлĕх усрамалли сатаҫсемпе ҫыхăнтарса кĕретех урăхлатма тăрăшмалла.

Йалхуҫалăхне вăйлăрах електритсăласа ҫĕнĕ вăйхалпа ĕҫлемелле туса, пысăкрах йалхуҫалăх машшинĕсем кӳртерсе, йалхуҫалăх таварĕсене ĕҫлесе улăштаракан претприйаттисем уҫса, сăмахран Ҫавал шывĕ ҫинҫе електритсă станцси (Цивильстрой) ҫасрах лартмалла туса,—пĕтĕм йалхуҫалăхăн технĕкне хăвăртрах улăштарма тăрăшмалла.

Колхоссене нумайлатмалли иккĕмĕш полҫшевикле ҫуракипе пурнăҫа кĕртес ĕҫре ҫакăн пек сатаҫсем пулмалла; виҫĕ пусупа хура пусă йĕркине ҫине тăрсах пĕтермелле, суха пуҫне пăрахăҫ туса плукпа ĕҫлеме тытăнмалла, выльăх-ҫĕрлĕх нумайрах ĕрҫетмешкĕн выльăх апатҫĕ нумайтарах тумалла, тавара кайакăн тĕрлĕ культурăсем нумайтарах акмалла, тырпул тухăҫне хăпартмалла.

Уйрăм районсен ҫĕршывĕсемпе пурнăҫ майĕсене кура, республикри тĕрлĕ районсен йалхуҫалăхне те уйрăм происвотства йенне сулăнтарас ĕҫе ҫине тăрсах пурнăҫа кĕртмелле.

1931 ҫулта тума йышăннă ĕҫсене пурнăҫа кĕртсен, йалхуҫалăхĕн мĕн пур тухăҫĕ 32 проҫҫăн хутшăнса, йалхуҫалăхĕнҫе пĕрлештернĕ ҫĕктăр 22,5 проҫ. йышăнса тăмалла.

Ҫак сатаҫсене пурнăҫа ăнăҫлă кĕртмешкĕн пирĕн ҫăнласах полҫшевикла хăвăртлăхсемпе ĕҫлемелле. Анҫах ҫапах та ку тĕлĕшпе ҫуракипе хатĕрленес тĕлĕшпе уйрăмах, пайтах вырăнсенҫе ĕҫ нăсартарах пыраҫ. Иртнĕ ҫулта туса пĕтермелли пайтах пысăк ĕҫсем пурнăҫа кĕреймессĕрех йулнă. Ҫак уҫоксене пит тĕплĕн шута илсе, малашне мĕн пур сатанисемпе плансене пурнăҫа кĕртессимĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешес пулаҫ.

II. Промышлĕннăç йенĕпе.

Республĕкĕн мĕн пур халăх хуçалăхне вăйлатас ĕçри тĕп сатаҫсенҫен пĕри—вăл малашне промышлĕннăçа хăвăртрах вăйлатса йамалла тăвасси.

Промышлĕннăçа аталантармалли тĕп çулйĕрсем çаксем пулмалла.

1. Малашне вăрманпа йăвăç ĕçлемелли промышлĕннăçа тĕреклетсе, мĕн пур йăвăç хатĕрĕсемпе пур йенĕпе те усă курмалла туса, йăвăç ĕçлекен çĕнĕ кăмпинатсем орканисатсилесе, вĕсене вăрман химипе хут тумалли ĕçпе çыхăнтармалла.

Вăрмансене тĕрĕс йĕркепе касса усă курса, каснисен вырăнне, ăраснах йуман вăрмансене çĕнĕрен хунаттармалли ĕçсене кĕретех вăйлатса, вăрман хуçалăхне тĕпĕ-йĕрĕпех лайăхлатмалла.

2. Вырăнсенҫе тупăнакан сырйосене асăрхаса çуртйĕр тумалли маттериалсем хатĕрлес ĕçе мĕн вăй çитнĕ таран сармалла.

3. Промыслаллă копператси урлă алăсти промышлĕннăçĕпе йалхуçалăх таварсене ĕçлесе уйăштаракан претприйаттисем нумайрах уçса сармалла.

4. Çĕнĕрен урăхла промышлĕннăçсем те орканисатсилемелле (вак-тĕвек кимĕсем тăвасси, тимĕр-тăмăртан тĕрлĕ йапаласем, тата ытти те.).

5. Тĕп хими промышлĕннăçне орканисатсилесси. Сăнаса пĕлнĕ тăрăх çĕр айĕнҫе темĕн ҫухлĕ фосфоритпа çунакан сланетс сапасĕ—(Вăрнар таврашĕнҫи районра) пуррипе, çак пуйанлăхсемпе промышлĕннăçра вăйлăрах усă курмалли—пайанхи ҫеретри сатаҫ пулса тăраҫ.

Çакăнта кăтартнă майсемпе промышлĕннăçа мĕн вăй çитнĕ таран хăвăртрах аталантарса, çак çитес çулсенҫе уйрăмах çак претприйаттисене уçма кирлине кăтартса, вĕсене тума ҫасрах пуçласа йама тăрăшмалла: Улатăрти йăвăç кăмпинаҫĕ, хут хапрăкĕ. ким савăҫĕ. тимĕр-тăмăр савăҫĕ, клинккĕр (урама сармалли ҫул) савăҫĕ, енеркохимкомпинат.

Хими промышлĕннăçне хăпартас ĕçе тĕп сатаҫ вырăнне хурса. Енеркохимкомпинат тума кирлине тĕплĕн кăтартса парса, унăн пройектине кăçалах хатĕрлесе, 1932 çулта вăл кăмпината туса лартмалли ĕçе пикенсех тытăнмалла.

Ҫăваш республĕкĕнҫи промышлĕннăç ĕçĕсем çинҫен Совет республĕксен фетератсипе Сойус правиттĕлстви оркăнĕсем умĕнҫе Ҫăваш республĕк правиттĕлствин уйрăм ыйту лартмалла.

Алăсти промышлĕннăçĕ йенĕпе уйрăмах асăрхаса халăх хуçалăхĕнҫи пысăк вырăнта тăракан пур промысласене те промышлĕннăçлă копператсине йавăçтармалла, алăстисен ĕçне машинлăтса, електритсăлемелле, пĕрлехи маçтерскойсем уçмалла, çĕнĕ промысласем пуçласа сармалла, вырăнти сырйосенҫен çуртйĕр тумалли хатĕрсем тăвас ĕçе хăвăртрах вăйлатмалла.

Промышлĕннăç йенĕпе 1931 çул валҫи çакăн пек тĕп сатăсем парса çирĕплетсе хăварас: 1—промышлĕннăçа мĕн пурĕ 10 мĕлйун тенкĕлĕх капитал кĕртсе 1930-мĕш çулхинҫен 60 проҫ. ӳсмелле; 2—Халăх хуçалăхĕн тĕп канашĕпе Снапшени кăмиссариатне пăхăнса тăракан промышлĕннăçăн мĕн пур тухăçĕ 276 мĕлйун тенкĕлĕх пулмалла, ӳсĕмĕ 1930-мĕш çулхи шутран 122 проҫ. ытларах пулмалла; 3—Хамăра ларакан тавар хакне 10 проҫ. ҫакăрах пулмалла, ĕç ӳсĕмне 32 проҫ. хăпартмалла; 4—Çĕмĕрлерипе Кускарма лавккари кăмпинатсене, Шупашкартипе Ĕнĕш-пуçĕнҫи кирпĕҫ завăҫĕсене, ҫерепитсă претприйаттине туса пĕтерсе, ĕçлеттерме пуçламалла, ким савăтне, иккĕмĕш фосфорит савăтне, тата Шупашкарти типокрафине тума пуçламалла; 5—Вут шанкăпа вăрман каçса хатĕрлес ĕçе, йута ăсатмалли тавар тĕлĕшпе уйрăмах, мĕн кирлисене пурне те тултармалла.

Промышлĕннăç ӳссе пынипе темĕн ҫухлĕ електритсă вăйĕ кирлине асăрхаса, Шупашкартипе Канашри електростантсисене сарма кирлине, Йетĕрнепе Улатăрта çĕнĕ стантсисем тумаллине кăтартас.

Промышлĕннăçа вăйлатасси пуринҫен ытла çĕнĕ сырйосемпе енерки памалли хатĕрсем шыраса тупассинҫен килессине шута илсе, республĕкри çĕршыври пуйанлăхсене йĕрлесе тупас ĕçе тата ытларах вăйлатмалла, çак пысăк ĕçе советсемпе опҫăллă оркаписатсисене, пĕтĕм ĕçхалăх массине тимлĕн йавăçтармалла.

Çав сатаҫсене пурнăçа кĕртмешкĕн çитĕнӳсемпе пĕрлех мĕн пур çитменлĕхсене те тимлĕн шута илмелле. Промышлĕннăç ĕçĕнҫи иртнĕ çулхи ҫи пысăкрах çитменлĕхсем çаксем пулнă: мĕн пур тавар тухăçлăхĕ планра кăтартнă шута (20 проҫ.) тулайман, ĕçĕн пахалăхне хăпартас йенĕпе (ĕçĕн тухăçне хăпартасси, тавар хакне йӳнетесси) пурнăçа пĕтĕмпех кĕреймен, вăрманпа вута хатĕрлес ĕç пит йăпăх пыраҫ. Çĕнĕ промышлĕннăç строительствинҫе те пысăк çитменлĕхсем пур: çурт лартмалли пройектăсене вăхăтра хатĕрлемен, строительствăн хакне йӳнетеймен, стройматерйалсене вăхăтра хатĕрлеймен, ĕçе технĕк йенҫен хăш вырăнсенҫе çителĕклĕ асăрхайман, йертсе те пыман.

Советсен сйесĕ пур советсемпе хуçалăхлă, опђăллă орканисатсисене те ĕçри мĕн пур çитменлĕхсене, прорывсене пĕтĕмпех сирсе сотсиалисăмла çĕнĕ майсемпе вăйлăн ĕçлесе (хирĕçле промфинплан, сотсиалисăмла ăмăрту утарнĕкле, опђăллă пукçирла ĕçлесе) ĕç йĕркисене лайăхлатса план тăрăх мĕн хушнисене пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме хушаť. План тăрăх кађђĕствă (пахалăх) йенĕпе кăтартнă ĕçсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пур хуçалăхлă опђăллă орканисатсисен те тимлĕн тăрăшмалла.

Пур претприйаттисенђе те кашни ĕçре пĕр пуçлăх ответлă пулмалли йĕркене пурнăçа ђăнласах кĕртмелле. Происвотствă ĕçĕсем йĕркесĕр пулса пынипе, ĕçсĕр ахаљ тăрса иртерессипе, ĕç тисђиплинине пăсакансемпе, ĕçе вăйĕн шайĕн тăвассипе, ĕçлекенсем йаланах улшăнассипе, прокулсемпе вăйлă кĕрешмелле, пурлăха пăсăласран вуткăвартан, сăтăрçăсенђен сыхламалла, происвотствăри оппортунисла хăтланакансемпе пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешмелле.

Промышлĕннăçпа претприйаттисене йертсе пыракансен хăйсен ĕçне тĕплĕ вĕренсе, ĕçпе строиттĕлствăн технĕкне ăнласа илмелле, ĕçе çийелтен çех йĕртсе пырассипе тата промышлĕннăç пуçĕнђе йертсе пыракан çынсем йаланах улшăнкалассипе хытă кĕрешмелле.

Промышлĕннăç ваљљи технĕк катăрсем, ĕçе ăста пĕлекенсем хатĕрлемелли сатађа пĕтĕмпех пурнăçа кĕртмелле, уйрăмах рапођђисене вырăнти халăхран, хĕрарăмсенђен хатĕрлеме тăрăшмалла, çак ĕçе хăш пĕр вырăнсенђе формишĕн çех ђинавнĕкле йе оппортунисла туса пырассине кĕретех пĕтермелле..

III. Транспăртпа çыхăну ĕçĕ.

Çул йапăхлăхне пĕтерсе, çулйĕр хуçалăхне лайăхлатас ĕç Ђăваш респуплĕкĕн хуçалăх строиттĕлствинђи ђи пысăк сатађсенђен пĕри пулса тăмалла.

Çулйĕрсене йусас ĕçе халăха йавăçтарни усăллă пулнине асăрхаса, вырăнти çулйĕрсене лайăхлатмашкăн ĕçе тата вăйлăрах сармалла. Еккономĕк йенĕпе паллă вырăнта тăракан пысăкрах çулсене уйрăмах лайăхлатмалла. Шупашкарпа—Канаш, Канашпа—Патĕрйел, Йетĕрнепе—Çĕмĕрле хушшинђи çулсене), тата машшинпа трактăр стантсисем уçăлнă районсенђипе пысăк савăтсен таврашĕнђи çулсене лайăхлатмалла.

Ҫулйĕр строиттĕлствине, ларса йе тавар турттарса ҫӳрессине машшинлатас ĕҫе вăйлăрах сарса, ҫи малтанхи ҫеретре ҫав тракътăсене автопуссем, машшинлă крусовиксем ҫӳремелли тумалла.

Канашпа Шупашкар хушшинҫи ҫукун ҫула тутармашкăн правиттĕлствăна ĕҫе татăклăн туса пĕтерме хушас.

Йалсоветсене, машшинпа трактăр стантсисем уҫăлакан районсенҫе уйрăмах телефонпа нумайрах сыхăнтармалла, тата Шупашкарта ратио тăрăх илтĕнтерсе калаҫмалли стантси уҫмалла.

IV. Тĕрлĕ ҫуртйĕр лартассипе комунальнăй тата пурăнмалли ҫуртйĕр хуҫалăхĕ.

Пысăк строиттĕлствă йенĕпе, уйрăмах шкулсем, пульницасем, комунальнăй ҫуртсем тăвас тĕлĕшпе иртнĕ ҫулхи плана пайтах тултарайманнине паллă туса, правиттĕлствăн ҫĕнĕ строиттĕлствă вăхăтне лайăхрах хатĕрлемелле туса, мĕнле хатĕрленисене те строиттĕлствă ĕҫĕсем мĕнле пынисене те пĕр ҫарăнмасăр тишкĕрсе тĕрĕслесе тăмалла.

Строиттĕлствă ĕҫне вырăнлă пурнăҫа кĕртейменнин ҫи паллăрах сăлтавĕсенҫен пĕри кирлĕ хатĕрсем (кирпĕҫ) ҫитменнине асăрхаса, промыслапа ҫуртйĕр копперативи урлă та, колхоссемпе хула совеҫĕсем урлă та, тăмран-ҫулран тĕрлĕ стройматтерйалсем нумайрах тăвас ĕҫе хăвăртрах сармалла. Ҫавăн йышши стройматтерйалсене туса хатĕрлес тĕлĕшпе Ҫăваш ҫĕршывĕ пит пысăк вырăн йышăнса тăмалла.

Комунальнăйпа пурăнмалли ҫуртсем тăвас ĕҫ хуҫалăх вăйланса пыракан хăвăртлăхсенҫен кайарах йулса пынине шута илсе хуҫалăхăн ҫак пайĕсене хăвăртрах шутарса, промышлĕннăҫ аталанакан вырăнсенҫе хуласенҫе лайăхлатассипе пурăнмалли ҫуртйĕр тăвас ĕҫ ҫине уйрăмах тимлĕ пăхмалла. Хуласен планĕсене йĕркелессипе пурлăхсене шута илсе ĕҫе ҫитес вăхăтсенҫен пĕтермелле.

Вырăнти строиттĕлствă валҫăи ĕҫе йурăхлă вăрман туйăнтарас тĕлĕшпе, тата колхоссемпе ҫухăнсен, вăтамсен хуҫалăхĕсене вăрман парас ĕҫе правиттĕлствăна тĕпĕйĕрĕпех аванлатма хушас.

V. Сотсиальнăй культтур строиттĕлстви тĕлĕшпе.

Ĕҫхалăхĕн культтурлăхне хăпартассипе катăрсем хатĕрлес ĕҫ сотсиализăм тăвас ĕҫе ăнăҫлă пулма пулăшакан условисенҫен пĕри пулнине шута илсе, правиттĕлствăн 1931 ҫулта пур аҫа-пăҫасене

те кĕçĕн шкулсенђе вĕрентессипе хут пĕлменлĕхе пĕтерессине пĕтĕмпех пурнăçа кĕртмелле.

Ӳссе пыракан халăх хуçалăхĕпе куљттур строиттĕлствине кирлĕ таран катăр хатĕрлес ĕçсене мĕн вăй çитнĕ таран сарса, 1931 çул кĕркуннерен пуçласа йалхуçалăхне вĕренмелли аслă шкул уçмалла тăвас. План тăрăх уçма йышăннă технĕккăмсене вăхăтра уçмалла, пысăкрах претприйаттисен çумĕнђе (Çĕмĕрлерипе Куславккари кăмпинатра, «Пољшевик» савăтра, фосфорит арманĕнђе) хапрăк-савăт шкулĕсем, тата тĕрлĕ ăстасем квалификатсиллĕ ĕçлекен вăйхалсем хатĕрлекен курссем уçмалла, çак ĕçе хуçалăх оркăнĕсене йавăçтармалла.

Сывлăх упрас тĕлĕшпе пысăкрах вĕреннĕ тухтăрсем тĕрлĕ ђирсенђен пулăшмалла тумалла, сикекен ђирсемпе татăклăн кĕрешмелле, сăмахран, 1931 çулта ђеђђе ђирне пĕтĕмпех пĕтермелле ађа çуратакан хĕрарăмсемпе куçђирлисене вăйлăрах пулăшмалла тумалла. Шупашкартипе Канашри поликлиннĕкĕн, тата Йетĕрнери леђђепнитсăн ĕçĕсене урăхларах йĕркелесе, вĕсем ђăнласах пĕтĕм респуплĕкшĕн, ĕçлесе, ђирсене ăста емеллекен тĕпри вырăнсем пулса тăмалла.

Траххом ђирĕпе кĕрешсс ĕç хуçалăхпа куљттур ĕçĕсен хăвăртлăхĕнђен кĕретех кайарах йулса пынине паллă туса, сывлăх упракан оркăнсен ĕçне траххомпа кĕрешес тĕлĕшпе массăллă ĕçе кĕретех вăйлатмалла тумалла.

VI. Тавар улăшупа валеçу.

Рапођђисене тавар туйантарас ĕçе тĕпĕйĕрĕпех лайăхлатса, çак снапшени ĕçне происвотствăллă плансемпе çыхăнтарса, сотсиалисăмла майсемпе ĕçлекенсене уйрăмах асăрхаса мĕн кирлисене пурне те памалла.

Хупă столовăйсемпе тавар уйăрса паракан вырăнсене уйрăмах тимлĕ йĕркелемелле. Опђăлă майпа тăрантарас ĕçе кăçалах пур пысăкрах претприйаттисемшĕн те йĕркелесе, икĕ хапрăк-кухњă тумалла (Çĕмĕрлере, Шупашкарта).

Хуласен çывăхĕнђе промышлĕннăçлă хуçалăхсем тăвас ĕçе сармалла. Промышлĕннăçлă районсенђе пахђа-çимĕç хуçалăх ĕçне вăйлăрах сармалла (Çĕмĕрле, Вăрнар, Шупашкар, Куславкка, Канаш).

Йалти копператтивсене кĕретех лайăхлатса, уйрăмах колхоçнĕксене хапрăк-савăт таварĕсем туйантарас ĕçе лайăхлатмалла,

çак ӗçе происвотствӑ планӗсене, тӗрлӗ йапала хатӗрлес ӗçе ӑнӑçлӑ пурнӑçа кӗртсе пынипе çыхӑнтарса пымалла. Йалсенҫе суйлав йӗркипе орканисатсиленӗ кооператтивсем пулмалла. Тавар туйантарас ӗçре массӑллӑ тишкӗрӳ пулмалла, кооператси аппаратӗнҫен йут елементсене хуса кӑлармалла.

Йалхуçалӑх протуксисемпе сырйо хатӗрлесси, уйрӑмах ашкакай, сӗт-çу, сӳс-кантӑр пухас ӗç пит наҫар пынине паллӑ туса, советсемпе колхос-кооператси оркӑнӗсен хӑйсен ӗçне халех урӑхлатса, çак ӗçе пӗтӗм ӗçхалӑх массине тимлӗ йавӑçтарса, ку ӗçе кӗске вӑхӑтрах тӗпӗ-йӗрӗпе улӑштарса, клас çулйӗрне тӗрӗс тытса пырса, йышӑннӑ плансене пӗтӗмпех пурнӑçа кӗртсе пымалла.

VII. Укçа-тенкӗ тӗлӗшпе.

Хуçалӑхпа культтур строиттӗлстви планне пурнӑçа кӗртмешкӗн нӳтшетӑн кӗмелли тупӑшӗсене те уйрӑм орканисатсисен финанс планӗсене те пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑçа кӗртсе пымалла. Укçасене выраннӑ ӗçсене çех тыткаласа салатмалла, уйрӑм оркӑнсенемӗн ҫухлӗ укçа-тенкӗ парса тӑрассине вӗсем происвотствӑпа финанс планӗсене пурнӑçа мӗнле кӗртсе пынине кура памалла. Укçатенкӗпе план тӗлӗшӗнҫен пит çирӗп тисҫиплин тытмалла туса, укçа-тенкӗсене, тӗрлӗ хатӗрсемпе вут-шанкӑсене пит тирпейлӗ тыткаламалла.

Халӑх аллинҫи укçа- тенкӗсене мопилисатсилес тӗлӗшпе мӗн пур вӑйхала хурса ӗçлемелле, халӑх укçи-тенкисене ӗçе кӗртмелли плана пӑсакансемпе, клас çулйӗрне пӑсса ӗçлекенсемпе хытӑ кӗрешмелле.

VIII.

Пилӗк çуллӑха тӑватӑ çулта пурнӑçа кӗртес тӗлӗшпе татӑкласӑ виççӗмӗш çулхи пысӑк сатаҫсене тултарса пырас ӗç клас кӗрешӗвӗ питрех те çивӗҫленнӗ вӑхӑтра пулса пыраҫ, кулаксемпе непмӑнсем, сӑтӑрçӑсем, империалисла вӑрӑ-хурахсем талкӑшпех сотсиалисӑмла наступлени ӗçне урса кайсах хирӗç тӑраççӗ. Хамӑр умри сатаҫсене епӗр Ленин парттин тӗп çулйӗрне çирӗп тытса пырса, тӗрлӗ сулӑнҫӑксемпе пӗр ҫарӑнмасӑр кӗрешсе, ӗçхалӑх массин пур вӑйхӑватне полҫшевикла мопилисатсилесе комунисла ӗç майӗсене сотсиалисӑмла ӑмӑртупа утарнӑкле ӗçлессине малашне тата вӑйлатса, патшалӑхӑн, колхос-кооператси аппаратҫӗн пуçлӑхӗсене те хаҫхи сотсиалисӑм строиттӗлствин тапхӑрӗнҫи тӗ

сатаҫĕсемпе килĕштерсе кĕретех урăхлатса, кăпиталисла елементсем ҫине кĕрстех вăйлăн пусса, талкăшпех колхоссем тунă майпа кулаксене пĕтĕм класĕпех пĕтерсе ҫех вырăна кĕртме пултаратпăр.

Парттипе Совет влаҫĕн Ленин политтĕкне пурнăҫа кĕртес тĕлĕшпе советсене вăйлăрах ĕҫлеттермелли сатаҫа польшевикла хастарлăхпа тăрăшса пурнăҫа кĕртмелле, ҫавăнпа советсене утарнĕкле ĕҫлес йĕнне, колхоссемпе МТС йĕнеллс ҫавăрса тăратса, советсен ĕҫĕнҫе сылтăмла оппортунисла хăтланаканссмпе пĕр ҫарăнми кĕрешмелле. Тĕпри оркăнсем йалсоветсемпе районсенҫи оркăнсене йертсе пырас ĕҫе тĕпĕйĕрĕпех лайăхлатса, вĕсене йаланах пулăшса ĕҫĕсене майласа пымалла. Сут—тишкĕрӳ оркăнĕсене хăйсен умĕнҫи сатаҫсене татăклă туса пымашкăн вĕсен тивĕҫлĕхне хăпартмалла.

Колхоссен, ҫухăнсемпе патраксен, телекат пуххисен вирлĕхне мĕн пур майсемпе ҫирĕплетме тăрăшмалла.

Сотсиалисăм тăвас ĕҫре план ĕҫне йĕркелесси пит паллă вырăнта тăмаллине шута илсе, правиттĕлствăн план ĕҫне тĕпре те (Хоспланра, тĕрлĕ ветăмлăхри план йаҫейккисене), вырăнсенҫе те (районсенҫе план комиссийĕне) ҫав оркăнсене тĕреклетсе, вĕсен авторитетне хăпартса кĕретех лайăхлатмалла.

Патшалăх аппаратне пӳрократланса кайнă йут елементсенҫен малашне те тасатса пырса, ĕҫсене ҫăнласах пурнăҫа кĕртсе пынине пĕр ҫарăнмасăр тĕрĕслесе пымалла, пролеттарлă самокриттĕк йĕркипе сӳтсе йавса, патшалăх аппаратĕнҫе тĕл пулакан ҫитменлĕхсемпе вăйлă кĕрешсе пымалла.

Патшалăх аппараҫĕн пур сыпăкĕсене те рапоҫҫисене, утарнĕксене, колхоҫнĕксене, ҫухăнсемпе вăтамсене, уйрăмах клас кĕрешĕвĕнҫе пиҫсе тухнă хĕрарăмсене ĕҫлĕ вырăнсене хăйуллăнах лартмалла. Кĕҫĕнрех совет сыпăкĕсенҫе ĕҫлемелли ҫынсене ҫĕнĕрен вĕрентсе хатĕрлес ĕҫе вăйлăрах сармалла.

Аппарата ҫăвашлатас ĕҫ наҫар пынине паллă туса, советсен сйесĕ пур советсемпе опҫăллă орканисатсисене те ҫак тĕлĕшпе Ленин кăтартнă натси политтĕкне пурнăҫа ҫирĕп кĕртсе, ĕлĕк пуҫра тăнă халăхăн шовинисăмĕпе—ĕҫе кансĕрлекен ҫи пысăкрах ҫак хăрушăлăхпа, тата вырăнти натсионалисăмпа, Елмен хыҫҫăн кайакансемпе, пуршуаҫиллĕ-натсиллĕ шухăшсемпе пĕр килĕшмесĕр кĕрешсе, уҫрештенисене ĕҫлеме тĕп халăхрăн ҫынсем хатĕрлесе тупса лартас ĕҫе тĕпĕ йĕрĕпех ҫĕнетсе вăйлатма хушаҫ.

Ҫăваш республикĕнҫи советсен 4-мĕш сйесĕ пур рапоҫҫисемпе колхоҫнĕкссне, патраксемпе ҫухăнсене, вăтамсене, Ҫăваш ҫĕршывĕнҫи мĕн пур ĕçхалăхне Ленин партти тавра çирĕпрех ҫăмăртанса, капиталисла элементсем çине пĕтĕм фронҫĕпе пусса, вĕсем хирĕçнине пĕр хĕрхенмесĕр çапса салатма ҫĕнет. Мĕн пур йăвăрлăхссне çĕнтерсе, 1931-мĕш çулта пĕтĕм вăйхалпа сарăлса ĕçлесе пилĕк çуллăх плана тăватă çулта пурнăçа кĕртмелле туса, совет çĕршывĕн тăшманĕсенҫен сыхланас мĕслеҫĕсене малашне те çирĕплетсе пырар.

Ҫăваш республикĕнҫи советсен 4-мĕш
сйесĕн претçетаттĕлĕ **А. Никиттĕн.**

Ҫăваш республикĕнҫи советсен 4-мĕш
сйесĕн çекреттарĕ **А. Хариттонăв.**

Шупашкар, 1931 ç. февралĕн 12-мĕш кунĕ.

3. Культур строительствипе катăр хатĕрлесси çинҫен.

Йалхуçалăхне сотсиализăмла реконструксипе, парттипе правительствă кăтартнисене пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пынипе, çак иртнĕ 2 çул хушшинҫе культур строительствинҫе пайтах çитĕнӳсем пулнă.

Сотсиализăмла культуршăн кĕрешме пĕтĕм рапоҫҫисен, колхоçнĕксен, патраксемпе ҫухăнсен, тата вăтамсен массисем тытăнҫĕç. Çак массăллă хускану парттин культурлă революцутси лозăнкне ҫăнласах пурнăçа кĕртме май параҫ, тата малашне сотсиализăм тăвас ĕçĕн хăвăртлăхне ӳстерме капиталисăм çине кĕрех пусма, талкăшпе колхоссем туса кулаксене класĕпех пĕтерме май параҫ, пилĕк çуллăхăн татăклă виççĕмĕш çулĕнҫе сотсиализăмла экономĕкĕн никĕсне хывса пĕтерсе, пилĕк çуллăх плана тăватă çулта пурнăçа кĕртме май параҫ.

Культур фонтĕнҫи çитĕнӳсене кăтартакан ĕçсем çаксем: 1926 çулта хут пĕлекенсен шутĕ мĕн пур халăх хушшинҫе 30 проҫҫăн пулнă пулсан, 1930 çулта 42 проҫҫăн таранҫен ӳснĕ. Культур уҫрештенисен, вĕсенҫе вĕренекенсен шутĕсем, вăл уҫрештенисемпе усă куракан шутĕ те ӳснĕ; культурлă уҫрештенисенҫе хĕрарăмсен шутĕ ӳснĕ, йулашки икĕ çул хушшинҫе хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçри хăвăртлăхсем 1931 çулта май уйăхĕн 1-мĕшне тĕп ӳсĕмри çынсен хушшинҫе хутпĕлменлĕхе пĕтĕмпе пĕтерме май параҫ; кунтан пуçне технĕккăмсемпе рапфаксене сарăнă, 2 сыпăклă шкулсене урăхларах майланă, Ҫăваш республикĕнҫ

ҫи пирвайхи аслă шкула—Петакокĕк инҫтиттутне уҫнă, ытти аслă шкулсенҫе вĕренекенсен шутĕ ӳснĕ, Ăслăлăхпа сăнавлă йĕрлӳ инҫтиттуҫĕ уҫăлнă, ҫăвашла хаҫат-шурналсем, кĕнекесем кăларас ĕç сарăлнă, натсиллĕ искуствă ӳссе çирĕпленнĕ, т. ыт. те. Шкулсен пурлăх хатĕрĕсем тĕрекленнĕ; уҫитĕлсен, патраксемпе ҫухăнсен аҫисен пурнăҫĕ çултан çул аванлансах пыраҫ; рапоҫҫисенҫен, колхоçнĕксенҫен, тĕп халăхран пролеттарлă спетсиалиссем çĕнĕ катăрсем ӳссе пыраççĕ.

Çак вăхăтри ҫи пысăк çитĕнӳсенҫен пĕри — вăл кĕçĕн шкулсен шутĕ хăвăрттăн ӳссе пыни, çак майпа 1930 çулхи кĕркуннерен пуçласа шкул çулхи аҫапăҫасене 97 проҫҫăн таран кĕçĕн шкулсенҫе вĕрентме пуçланă.

Сĕес çак çитĕнӳсене уйрăмах паллă туса, правиттĕлствă 1930 çулхи кĕркуннерен пуçласа 8-9-10 çулхи аҫасемпе 11—15 çулхи çитĕнмен çамрăксене пурне те кĕçĕн шкулсенҫе вĕрентмелле тунă ĕçе ырлаҫ.

Совет çĕршывне хăвăртрах индустрилесси, йалхуçалăхне коллективласа сотсиалисăмла улăштарасси реккоĕнструксиллĕ тапхăрăш тĕп сатаҫĕсенҫен пĕрне татăклăн пурнăçа кĕртме хушаҫ,— вăл сатаҫ: пролеттарлă çпетсиалиссен катăрне, квалификкатсиллĕ ĕçлекен вăйхалсене хатĕрлесси, культурлă уҫрештенисен ĕçĕсене тĕпĕйĕрĕпех урăхлатса лайăхлатса, массăсен культурлăхне хăпартса, сотсиалисăм строиттĕлствин малалли сатаҫĕсене хăвăртрах, лайăхрах пурнăçа кĕртсе, советсен çĕршывĕн сыхлăхне тата хыттăрах çирĕплетесси.

Культурлă фронтри çитĕнӳсене паллă туса, сĕес çапах та вăл çитĕнӳссне, уйрăмах ĕç пахалăхне пĕтĕм халăх хуçалăхне сотсиалисăмла улăштарассипе пĕтĕм халăх массине комунисăмла вĕрентсе урăхла йĕркене хăнăхтарас тĕлĕшпе пирĕн умра тăракан пысăк сатаҫсене пурнăçа кĕртме çителĕклĕ мар тесе шутлаҫ.

Культур фроҫĕ халăх хуçалăхĕ ӳсекен хăвăртлăхсенҫен каяларах йулса пыраҫ. Пуринҫен ытла аҫапăҫасене шкулҫҫен вĕрентмешкĕн, массăллă политçут тĕлĕшпе ĕçлемешкĕн, катăрсем хатĕрлесси, кинопа ратио, массăллă искуствăна аталантарасси, вĕренӳпе—меттотĕк тĕлĕшĕнҫен йертсе пырасси, тата ытти ĕçсем те кайарах йулса пыраççĕ. Кунтан пуçне культçут уҫрештенисен ĕçĕнҫе хăш ҫухне клас çулйĕрне уççăн паллăн тытса пырасси, итеолоки йенĕпе йалан тĕрĕс пыни çук, хăш ҫухне ĕлĕк пуçпулса пурăннă халăх шовинисăмĕ те выränти халăх шовинисăмĕ те па-

лăркалаҫ, культур ĕçĕнҫе сотсиалисăмла наступленин тĕп сатаҫĕсемпе çыхăнтарса ĕçлеме пĕлменни те пулкалаҫ.

Çпетсиалиссен катăрĕ шуҫĕ те çителĕклĕ мар. Вĕсен хушшинҫе халĕ те рапоҫҫисенҫен, колхоçнĕксенҫен, патраксенҫен, ҫухăнсенҫен, вырăнти халăхран хатĕрленнĕ сийсем халĕ те сахалрах, спетсиалиссенҫен хăшĕсене опҫăллă ĕçе хастарлăн йавăçтарман, вĕсенҫен хăшĕ пĕри клас йенҫен тăшманлă ĕçсем туни те пулкалаҫ. Спетсиалиссемпе квалификкатсиллĕ ĕçлекенсен катăрĕ хатĕрлес тĕлĕшпе çирĕп план çук, хăшпĕр совет йе опҫăллă орканисатсисем катăр хатĕрлес ĕçе пит пысăк вырăнах шутламаççĕ.

Культурлă революцутсипе катăр хатĕрлес ĕçе малашне те çирĕплетсе пымашкăн, Ҫăваш республĕкĕнҫи советсен 4-мĕш сĕссĕ çапла йышăнаҫ:

1. Культур строиттĕлствине малашне вăйлăрах сарса, халăх хуçалăхĕ ӳсĕмĕнҫен йулса пынине кĕретех пĕтермелле, малашне халăхăн культурлăхне хăпартса, политтĕк ĕçне вĕрентмелле, çынсене интернатсионаллă вĕрентсе хăнăхтармалла.

2. Пур аҫа-пăҫасене те вĕрентессипе хут пĕлменлĕхе пĕтересси çак вăхăтсенҫе çапăçуллă пысăк сатаҫ пулса тăмалла. Çак тĕлĕшпе халҫҫенхи çитĕнӳсене çирĕплетсе, пурне те вĕрентес ĕçе пит тимлĕн пăхмалла, вĕренсе тухиҫҫенех шкула çӳреме пăрахаканселпе кĕрешмелле, патраксемпе ҫухăнсен аҫисене пулăшмалла, шкулсен ĕçне лайăхлатмалла, класлă воçпиттани ĕçне пурнăçа тĕрĕс кĕртсе, аҫа-пăҫасене пур йенĕпе те уçăлтарса политехнĕкле вĕрентмелле. 1931 çултан пуçласа 11 çулхи аҫасене те пурне те вĕрентмелле тăвас.

3. Шкулра вĕренсе тухиҫҫенех пăрахасси пуринҫен ытла патраксемпе ҫухăнсен аҫи-пăҫисен тĕрлĕ йапала çитменнинҫен килнине шута илсе, пур 1-мĕш сыпăклă шкулсенҫе те аҫасене ирхи вĕри апат çийес ĕçе орканисатсилемелле, вĕренекенсене тумтирсемпе урана тăхăнмаллисем парса пулăшмалла, тата вĕссене шкулсене лашапа йе ытти майпа турттарса леçтермелле, шкулсем çумĕнҫе аҫасене пурăнмалли пĕрлехи хваттерсем тумалла. Пурне те вĕрентес ĕçе пурнăçа кĕртекен орканисатсисем мĕн пур вăйхалпа тăрăшса, хăйсен аллинҫи укçа-тенкисене, ытти хатĕрсене мопилисатсилемелле; «вçеопуҫ» валҫҫи вăл укçасене проҫҫăн тăрăх уйăрса, йе пӳтшет тăрăх хушса памалла, çапла кашни шкул çумĕнҫех вĕренекенсене пулăшмалли укçа йе ытти йапала хатĕрĕсен фонтисем тумалла.

4. Политехнĕкле вĕрентес ĕçе пурнăçа кĕртмешкĕн Çутĕç халăх кăмиссариаҭĕпе Çутĕç халăх кăмиссариаҭĕ тата Халăх хуçалăхĕн тĕп канашĕ шкулсене колхоссем, совхоссем, машшинпа трактăр стантсисем, происвотствăллă претприйаттисем çумне çыхăнтарса, вĕсем шкулсем çумĕнҭе маçтерскойсем уçмалла, çак ĕçе хуçалăх орканисатсисен, халăхăн хăйĕн укçа-тенкисене йавăçтармалла.

5. Пур аҭа-пăҭасене те кĕçĕн шкулсенҭе вĕрентмешкĕн сителĕклĕ шкулсем уçас ĕçе шкул çурҭĕсем çукки кансĕрлет. Çавăнпа малашне шкул çурҭĕсене ҭасрах туса лартасси пирĕн умра ҫĳ пысăк сатаҭсенҭен пĕри пулса тăраҭ. Правиттĕлствăн шкул çурҭĕсем тумашкăн нумайтарах укçа уйăрса памалла, тата строиттĕлни фонта вăйлатмашкăн халăхăн хăйĕн укçа-тенкисене йавăçтармалла.

6. Халҫхи вăхăтра хут пĕлменлĕхе пĕтермелли план шутĕнҭен 47 проҭҭăн çех ĕçе кĕрсе пыни—вăл уйрăм хăшпĕр орканисатсисем çак ĕçе пит тимлех тăрăшса туманшинҭен килнше асăрхаса, правиттĕлствăн мĕн пур майсемпе çак ĕçĕн хăвăртлăхне ӳстерсе, хамăр умра тăракан сатаҭа,—1931 ç. май уйăхĕн 1-мĕшне тĕн ӳсĕмри халăх хушшинҭе хут пĕлменлĕхе татăклă пĕтермелле тумалла.

